# ПРОЕКТА УЛШĂНУСЕМ КĔРТМЕЛЛЕ

ЧĂВАШ Республикин Конституцийĕн проекчĕ /вăл «Хыпарăн» нарăсăн 18-мĕшĕнчи номерĕнче пичетленнĕ/ пирки хамăн шухăша çырса пĕлтерес килет.

8-мĕш статьяпа килĕшӳллĕн чăваш тата вырăс чĕлхисем патшалăх чĕлхисем шутланмалла. Шел те, патшалăхăмăр тăван чĕлхене аталантарассишĕн çителĕксĕр ĕçлет. Пĕр тĕслĕх кăна. Вăрмарта иртекен пухусемпе канашлусенче пуçлăхсем /пурте чăвашсем пулин те/ вырăсла кăна калаççĕ. Тутарсем вара пачах урăхла: çĕр çынран 10-шĕ тутар пулсан пухăва тутар чĕлхипе ирттереççĕ, ăнланманнисене вырăсла куçарса параççĕ. Проектра «чăваш чĕлхи патшалăх чĕлхи» тесе çырса хумалла.

12-мĕш статьяра «Чăваш Республики тĕнчери тата тулашри экономика çыхăнăвĕсене хăй тĕллĕн хутшăнать» тенĕ. Пĕтĕмпех килĕшетĕп çак йĕркесемпе. Республика тулашĕнчи экономика çыхăнăвĕсене аталантарма май парĕ вăл.

14-23-мĕш статьясенче Чăваш Республикин гражданинĕн прависене пур енчен те гарантилесси çинчен çырнă. Анчах халлĕхе чылай чух тепĕр майлă пулса пырать. Этем правине пăснă тĕслĕхсем республикăра питĕ нумай.

"Центрпа Чечен Республики хушшинче вăрçă пуçланса кайрĕ. Кремльпе Чăваш Республики хушшинче «пушар» хыпса ан илтĕр тесе пулĕ, 30-мĕш статьяра çапла çырнă:"Чăваш Республикипе Раççей Федерацийĕн патшалăх влаçĕн органĕсен хушшинче ĕçсем тата полномочисем тĕлĕшпе тухакан тавлашусене çураçу процедурисем урлă татса параççĕ, çураçу процедурисем урлă татса пама май килмен чухне Раççей Федерацийĕн Конституци сучĕ татса парать".

Питех те кирлĕ сăмахсем. Хутшăнусене автоматсемпе, танксемпе мар, политика мелĕсемпе йĕркелемелле.

Чăваш Республикин Президенчĕ пирки. Паллах, Президент республикăра чи аслă çын, патшалăх пуçлăхĕ, унăн Конституци гаранчĕ пулса тăмалла. «Чăваш Республикин Президенчĕ пулма 35 çултан çамрăк тата 60 çултан аслă мар, Чăваш Республикин патшалăх чĕлхисене пĕлекен тата республикăра унăн кандидатурине Президента суйлама тăратичченхи юлашки 10 çул хушшинче 5 çултан кая мар пурăннă гражданина суйлама пултараççĕ» /34-мĕш статья/. Усăмлăх каламан çак йĕркесене.

34-мĕш статьяна çаплипех йышăнсан юлашки 5 çул хушши Чăваш Республикинче пурăннă тата чăвашла пĕли-пĕлми перкелешекен вырăс, тутар, акăлчан е нимĕç Чăваш Республикин Президенчĕ пулма пултарать. Чăваш Республикин Президенчĕ гражданлăхĕпе, чĕлхипе тата несĕлĕпе чăваш пулмалла. Çавăнпа 34-мĕш статьяна улшăну кĕртмеллех.

37-мĕш статьяра Президент полномочийĕсене палăртнă. Çав тери нумай вĕсем. Патшасен те ун чухлĕ пулман -тăр. Уйрăм çын темле ăслă пулсан та республикăра Президент влаçĕ çав тери вырăнлă теме çук. Коллегиллĕ орган - Совет влаçĕ хăйĕн яваплăхне çухатман. Уйрăм çын /Президент/ Патшалăх Канашĕн депутачĕсенчен ăслăрах йышăну тăвасси пирки иккĕленес килет.

38-мĕш статьяпа килĕшӳллĕн Чăваш Республикин Вице-президенчĕ кирек хăш наци çынни те пулма пултарать. Вице-президент президент çук чухне е вăл чирлесен, е вилсен Президент тивĕçне пурнăçлать. Ман шутпа, вице-президент та, Министрсен Кабинечĕн Председателĕ те, Патшалăх Канашĕн Председателĕ те чăваш пулмалла.

Патшалăх Пухăвĕн полномочийĕсем çав тери пĕчĕк. Уйрăм çын /Президент/ 47 депутатран тăракан органа /Патшалăх Пухăвне/ кирек хăçан та салатса яма пултарать. Правительство темле начар ĕçлесен те депутатсен правительствăна шанманни çинчен пĕлтерме хăраса тăмалла пулса тухать.

54-мĕш статьяпа та килĕшме çук. Унта çапла çырнă:"Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ Чăваш Республикин Президенчĕн полномочийĕсене кирек мĕнле майпа чарса лартнă чухне те отставкăна каять".

Ман шутпа, ку пур чухне те вырăнлă мар. Хăш-пĕр чухне Президента отставкăна яни çителĕклĕ, правительство хăйĕн тивĕçне малалла пурнăçлатăр.

59-мĕш статьяра «Чăваш Республикин Прокурорне Раççей Федерацийĕн Генеральнăй прокурорĕ Чăваш Республикин Президенчĕпе килĕшсе уйăрса лартать» тенĕ.

Ман шутпа, прокурор пирки ЧР Президенчĕн Патшалăх Пухăвне представлени тăратмалла. Патшалăх Пухăвĕ килĕшӳ парсан Раççей Федерацийĕн Генеральнăй прокурорĕ тивĕçлĕ йышăну тума пултарать.

62-мĕш статьян I-мĕш пункчĕпе килĕшӳллĕн районăн самоуправлени органне ертсе пыма район представителĕсен /депутачĕсен/ шутĕнчен пĕрне президент пуçлăх пулма уйăрса лартать. Сăмахран, Вăрмар районне административлă 18 территорие пайланă. Кашни пайлануран /ял Советĕнчен/ пĕр представитель. Пĕрин район пуçлăхĕ пулмалла. Ку тĕрĕс мар тесе каласшăн эпĕ. Пуçлăх кун пек ытларах пĕр ял Совечĕн интересĕсене хӳтĕлĕ. Район пуçлăхне тӳрремĕнех, пĕтĕмĕшле, вăрттăн сасăласа суйламалла е пуçлăха район Депутачĕсен пухăвĕ уйăрса ларттăр.

Çак статьян 2-мĕш пунктĕнче «ялсен самоуправлени органĕсене старостăсем ертсе пыраççĕ, старостăсене граждансен пухăвĕсенче суйласа лартаççĕ» тенĕ. Малашне староста пулмалла-ши? Вырăнти администрацисен пуçлăхĕсене суйлавçăсем вăрттăн сасăласа суйлаччăр. Çитет. пулĕ ячĕсене пĕр вĕçĕмсĕр улăштарма. Ятне улăштарнипех ĕçĕ улшăнмасть.

63-мĕш статьяра «вырăнти самоуправлени органĕсем /старостăсем/ муниципалитет харпăрлăхне хăйсем тĕллĕн тытса тăраççĕ, вырăнти бюджета йĕркелеççĕ, пурнăçлаççĕ, обществăри йĕркелĕхе сыхлаççĕ» тенĕ. Патшалăх влаçĕн органĕсем самоуправлени органĕсене хăйсем уйрăм полномочийĕсене пурнăçлама пурлăх тата укçа-тенкĕ уйăрса пама пултараççĕ-мĕн. Иккĕленӳллĕ: пама та пултараççĕ, памасан та пултараççĕ.

**В.НАРСОВ,**
**Вăрмар районĕнчи Тикаш ял администрацийĕн пуçлăхĕ.**